К84.89(=Чув)
К27
Ч-40341

Марина КАРЯГИНА

# Сас палли çĕршывĕнче



Национальная библиотека ЧР
4-040341

К84.89(=Чув)
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Марина КАРЯГИНА

# Сас палли çĕршывĕнче

Калавсем, юмахсемпе халапсем, эскизсем



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2006

УДК 821.512.111 — 93
ББК 84 (2 Рос=Чув) 5—4
К 27

Художникӗ ***Т.И. Немцева***

ПРОВЕРЕНО
20 28 СЕН 2017

Ч-40341

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

**Карягина М.Ф.**
К 27 Сас палли ҫӗршывӗнче: Калавсем, юмахсемпе халапсем, эскизсем. — Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2006. — 47 с.

**УДК 821.512.111—93**
**ББК 84 (2 Рос=Чув) 5—4**

**ISBN 5-7670-1432-9**

© Карягина М.Ф., 2006
© Чӑваш кӗнеке издательстви, 2006

# Ҫамрӑк тусӑм!

Эсӗ алла тытнӑ кӗнеке — чӑваш сӑмахӗсен пуян тӗнчине илсе ҫитерекен ҫулташ. Кунти халап-юмахсем халиччен вулама хӑнӑхнисенчен сисӗнмеллех уйрӑлса тӑраҫҫӗ. Вӗсене кашнинех пӗр сас паллинчен пуҫланакан сӑмахсенчен калӑпланӑ. Кӗнекере пурӗ 24 сас паллинчен пуҫланакан хайлав. Чӑваш алфавитӗнчи пек, 37 сас палли пулманнинчен тӗлӗнме ан васка: чӑваш чӗлхинче янӑравлӑ хупӑ сасӑсенчен *(б, г, д, ж, з, р, ф, ц, щ)* тата уҫӑ сасӑсенчен *(ё, о)* пуҫланакан чӑваш сӑмахӗсем ҫуккине асра тыт. Ъ, ь паллӑсенчен пуҫланакан сӑмахсем те ниепле те пулма пултараймаҫҫӗ.

Тата ҫакна та асӑрхаттарса хӑварам: кӗнекери хайлавсене кивӗ орфографи правилисене пӑхӑнса хайланӑран вӗсене улӑштармасӑрах хӑварнӑ. Сӑмахран, *тӑк* татӑка хальхи правилӑпа килӗшӳллӗн уйрӑм ҫыратпӑр пулсан хамӑн кӗнекере эпӗ ӑна уйӑрмарӑм. *(Азбука-тӑк азбука! Ҫӗнӗ ҫул-тӑк Ҫӗнӗ ҫул!)* Ытти уйрӑм ҫырӑнакан сӑмахсене те *(хӗрача, асаилчӗ)* пӗрлех ҫырас терӗм. Мӗншӗн тетӗр-и? Унсӑрӑн кӗнеке хӑйӗн тӗп вӑрттӑнлӑхне ҫухатать — пур сӑмах та пӗр сас паллинчен пуҫланман евӗр пулса тухать.

...Пĕр сас паллинчен пуçланакан калавсем çырас туртăм манăн ача чухнех çуралнă. Пĕррехинче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен пире, *ç* сас паллинчен пуçланакан сăмахсемпе усă курса сочинени çырма хушрĕ. Çуркуннеччĕ. Çут çанталăк хĕллехи тарăн ыйхăран вăранать. Кӳршĕ ялти шкултан таврăннă чух тăван тавралăх илемĕ чуна тыткăнларĕ. Çав каçах вăрăм калав çырса хутăм.

Тепĕр эрнере тăван литература урокĕнче киле панă ĕçе тĕрĕслерĕç. Сочинение пĕтĕм класс çăвар карсах итлерĕ хайхи.

— Мĕнле çырма пултартăн? — тĕлĕнеççĕ кун пеккине ниçтан та çырса илме май çуккине ăнланса.

— Çуркунне çавра çилĕ çавăрттарнăран çунатлантăм-ши?.. — каларăм хутăм хам та сисмесĕрех. Кайран кашни сас паллипе çырăнма пуçларĕç калавсемпе юмахсем. Çапла çуралчĕ те манăн «Сас палли çĕршывĕнче» кĕнеке. Унпа паллашсан, тусăм, эсĕ чĕлхе туйăмне аталантарасса, тăван сăмахлăхăмăр мĕн тери пуяннине тарăнрах туясса шанас килет.

Юлашкинчен тата тепĕр пĕчĕк сĕнӳ парам: кирек мĕн шăрçалама ларсан та калеме çĕкленӳллĕ кăмăлпа тытмалла. Вара санăн нихăçан та сăмах шыраса хăшкăлмалла пулмĕ — шухăшсем хăйсемех, юмахри асамлă кайăксем пек, сан пата вĕçсе килĕç. Ăнăçу сунатăп.

*МАРИНА аппăр*



# Аватайман Автан

*Тĕрленчĕк*

Альтук аппасен Автанĕ апат анманнипе аптăранă. Аран-аран аватнă — ах, анчах! Алхас Анчăк Автана анратмаллипех анратнă. Айван! Айван анчах-и — апшур! Апата авăртать анчах. Альтук аппа анкартинче аппаланать, Автан авăтаймасăр асапланать, Анчăк Автана асăрхамасăр аш авăрать. Айкашать анчах Анчăк, Автанăн ав апат анмасть. Ах, артак-çке, ах, ачашлаççĕ-çке Анчăка. Ашапатман! Ашак!

*(Апчху! астумасăр апчхулатать Альтук аппа.)*

Ам-ам-ам!<br>
Автан алки — авăнчăк,<br>
Алкум алăкĕ амантнă.<br>
Алăк айăплă-и, алки-и?<br>
Ам! Автанах айăплă:<br>
Асăрханман, апăрша! —

ашкăнса амлатнă Анчăк.

Аванмарланнă Автан. Алки аманни — амантăрин, авăтайманни — ай-тур-тур... Ах, алки авăнчăкчĕ, атти аванччĕ, аçамĕ аркă-аркăллăччĕ...

Автан асăрхаман, Айташ Акăш аннă-мĕн ампар айне, аллинче — азбука.

Акăш *(алхапăллăн)*. Автан, акă азбука. Асăнмалăх Айташ Акăшран. Азбукăра — алфавит.

Автан. Алфавит? Азбука? Акăш акамăм, апат анмасть-çке... Азбука апат-им аптăранăскершĕн? Авăтаймастăп.

Акăш. Асăрха-ха, Автанăм, азбукăра акă а-пельсин, а-лыча, а-рахис, а-нис, а-рпус...

Автан. Арахис? Арпус?

Астивесчĕ Автанăн! Аппетичĕ — арăсланăннилле! Аван! Акă алфавичĕ. Ансат-и? Ансат-иç! А! А! Автан анасласшăнччĕ ахăр, анасланмарĕ — авăтăнчĕ! Ак ача!

— А-а-а-а! — авăтрĕ Автан. Азбука-тăк азбука! Алфавит-тăк алфавит!

## Ăманпа Ăтăр ăмăртни

*Шахвăрту*



Ăманпа Ăтăр ăмăртаççĕ: ăскăч ăсласшăн. Ăманĕ ăстарах-и, Ăтăрĕ-и? Ăманĕ ăнкарайĕ-и ăслайне, Ăтăр-и? Ăмăртассишĕн ăраснах Ăман ăравасăр ăвăнчĕ*. «Ăман ăстарах», — ăнлантарасшăн Ăман ăнкарусăр Ăтăра. «Ăтăр — ăсчах,

---

* Ăравасăр ăвăн — питĕ хытă çун, ăнтăл.

Ӑманран ӑслӑрах ӑславҫӑ», — ӑнлантарасшӑн Ӑтӑр ӑнкарусӑр Ӑмана.

«Ӑхӑ... Ӑйӑ... Ӑвӑс... Ӑхӑ... Ӑнсӑртран...» — ӑслӑн ӑрӑмлать Ӑтӑр Ӑмана ӑмсантарса.

— Ӑрӑмла, ӑрӑмла, Ӑтӑр ӑсланинчен ӑстарах ӑсталӑпӑр, — ӑххӑмлатать Ӑман. — Ӑнӑҫу Ӑтӑра!

— Ӑрьях! — ӑҫтиҫук ӑрсурникле ӑрьяхлатать Ӑтӑр. — Ӑсларӑм! Ӑсларӑм! Ӑмӑрту-тӑк ӑмӑрту!

— Ӑҫта-ха? — ӑйхӑлать Ӑман.

Ӑ т ӑ р. Ӑпӑр-тапӑрла ӑскӑч-им — ӑшӑткӑчлӑ! Ӑшӑтать — ӑнкаратӑн-и? Ӑна Ӑстампула ӑсататӑп ӑшшӑ, ӑрӑвӑмӑрсемшӗн ӑшӑткӑчлӑ ӑскӑчӑм!

— Ӑх-хӑм-ӑх-хӑм! Ӑҫта-а? Ӑҫта ӑсататӑ-ӑп? Ӑҫтӑмаха* ӑсатмастӑн-и? Ӑшӑх-ҫке ӑшӑткӑчу-ӑскӑчу, ӑшлӑхсӑр, ӑсла-ха — ӑсаятӑн-и? — ӑшпиллӗн ӑнлантарасшӑнччӗ Ӑман — ӑнмарӗ.

— Ӑссӑр! — ӑмӑрланчӗ Ӑтӑр ӑсчах. — Ӑмансем ӑраттипех ӑнкарусӑр!

— Ӑсли ӑслах-ха, ӑраскалсӑртарах — ӑнмастьҫке! Ӑслани — ӑсталани-им? Ӑмансем Ӑтӑрла ӑсчахланаймаҫҫӗ, Ӑмансем — ӑстаҫӑсем! Ӑстаҫӑсӑр ӑсчах ӑсӗ... — ӑмсанаймӑн ӑраснах, ӑслаккайӑм! Ӑнт! — ӑшӗнчи ӑншӑртне ӑшӑтаймарӗ Ӑман.

Ӑ т ӑ р. Ӑсласса ӑсларӑм — ӑман ӑсталатӑр!

Ӑнкаруллӑраххисем, ӑнлантарӑр-ха: ӑман ӑстарах-и, ӑтӑр-и? Ӑман ӑслӑрах-и, ӑтӑр-и?

---

* Ӑ ҫ т ӑ м а х — ҫӑтмах.

# Вăрă

*Калав*



Вырсарникун Вăтакас вĕтĕр-шакăрĕ Вупăр вăрманне вĕçтерчĕ. Вĕсем вăрманта вăрçăлла вылясшăн. Вăлталлă Ванюшка вара витрепе вĕçкĕннĕн Вутăшкӳльнелле вĕлтĕртетрĕ.

Вăрманта вăшăлти варкăш вĕлкĕшет, вис, вăрăмтуна вĕçет.

Вылясан-вылясан вăтакассем выçрĕç.

— Ванюшкан вăлти витлемерĕ-ши, — вĕткеленеççĕ вĕсем.

Выçă вĕтĕр-шакăр вĕтлĕх витĕр Вутăшкӳльнелле васкарĕ.

Вутăшкӳль вăрманĕн варринче — ватă вĕренелĕх.

«Вутăшкӳль варринчи вĕренелĕхре вут-кăварпа вылямаççĕ», — вĕрентетчĕç ваттисем. Ванюшка вĕренелĕхрех-шим?

— Ва-нюш-ка!

Вĕршĕнсем вĕçкелеççĕ.

Ватă вăрмана вăратса Ванюшкан вĕшли виççĕ вĕрчĕ.

Вĕсем вĕлтĕрен витĕрех вĕçе-вĕçĕн вĕренелĕхе вашкăртрĕç. Вучах. Виçĕ-тăватă вутпуççи вăркаса выртать. Ванюшкан вăлти. Витри. Ванюшка Вупăр вăрманĕ варринчи варах вĕçтернĕ-шим

вара — вăкăрне вар вĕçĕнчи вашмăк вырăна вĕренлекенччĕ.

Вăтакассем вĕçлекелетнĕ вĕрене вуллинчен вĕрекен витрене вĕçертрĕç. Витрери вăлчасăр вĕтĕрккесене валеçрĕç: выçса вилмелле-им? Ванюшки, вăн, васкамасть.

— Вăл вăрăра-тăр, — вырнаçусăр ваклашать Витюк. — Вар вĕçĕнче — вĕллесем...

Ванюшка вĕшли вĕçĕмсĕр вĕрет: вăрра вăрттăн вĕçертесшĕн-ши?

— Ванюшка вăкăра вĕренленĕ вар вĕçĕнче-и? — вăрттăнлăха вăлтасшăн Витюк вăйлă вĕрекен вĕшлерен.

Вĕшли вĕтлĕхелле вирхĕнчĕ.



Ванюшка вĕтлĕхре виллĕн-чĕррĕн выртать.

— Ванюшка, вăран-ха. Вĕлтĕрен вĕтелерĕ-и? Вăрăмтунасем-и? Вупкăн вупрĕ-и? — витлешет Витюк.

— Вĕлле... вĕлле... Вăйăран — вăкăр... — вăтанать вăйсăрланнă Ванюшка.



## Евĕрлевçĕ

*Эскиз*

Евĕрлевçĕ ерсен — ерçетĕр-и, ерçейместĕр-и — евĕрлетех. Евĕкленетĕр-тĕк — евĕкленет, ейкеленетĕр-тĕк — ейкеленет, ехĕлтететĕр-тĕк — ехĕлтетет.

Ещĕк ешĕлленсе ешертĕр-ха — евĕрлевçĕ ешĕлленсе ешеретех. Ентешпе ентешленет, евчĕпе евчĕленет, енотпа енот евĕрленет, елпĕнпе елпĕнленет, енлĕк еккипе ерипенленет. Енчен ертӳçĕлле евитлесен — ертӳçĕ евĕр евитлет! Енчĕклине енчĕкĕпех евĕрлет, енчĕксĕррине – енчĕксĕр... Епле евĕрлет-ха евĕрлевçĕ?

Ейӳ ейме евĕр ейĕлнĕ — ерипен епретĕр. Евĕрлевçĕ ейĕве евĕрлейĕ-ши? Евĕрлеймест!

Ейӳ ейĕве епле евĕрлетĕр? (Евĕрлевçи — ейӳмĕн!)



# Ӗнчӗленнӗ Ӗнешке

*Халап*

Ӗлӗк-авал ӗшнере Ӗне ӗрлешнӗ. Ӗне-сурӑх ӗрчетекенсен ӗретсӗр ӗни-ши?

Ӗççи. Ӗнертенпе ӗçленӗ ӗççыннисем ӗшеннӗ ӗнтӗ. Ӗççӗртерехххисем, ӗшенме ӗлкӗрейменнисем, ӗшненелле ӗшеленнӗ.

— Ӗххӗм-ӗххӗм, — ӗххӗмлетнӗ ӗçкейӗм. — Ӗрчӗр-ха, ӗрчӗр...

Ӗни — ӗнем-канам-çке. Ӗмӗртсе ӗлкӗрнӗ-ши — ӗмӗртмест. Ӗнешки ӗмесшӗн-тӗр ӗнтӗ. Ӗмпиччесем ӗмкӗчпе ӗмӗртесшӗн — ӗнешки ӗммест, ӗçтеркӗчпе ӗçтересшӗн — ӗçмест. Ӗнсинчен ӗселеместӗн-и* ӗнесскере!

Ӗнтрӗк. Ӗнтӗркеттерет. Ӗшне ӗнчӗленнӗ. Ӗнешке ӗнчӗсене ӗшеленсе, ӗхлетсе ӗçнӗ, ӗмӗтсӗрленсе ӗçнӗ. Ӗнчӗ ӗçме-çиме-им-ха ӗнтӗ? Ӗненетӗр-и, ӗненместӗр-и — ӗмӗлки ӗнчӗленнӗ ӗмӗтсӗр Ӗнешкен. Ӗретсӗр ӗлккен!

Ӗрӗхтерет ӗнчӗленнӗ ӗмӗлке ӗмӗтелле.

Ӗнтӗ ӗмӗртенпе ӗмӗтсенче, Ӗмӗт ӗмпӗвӗн ӗшнинче, ӗрехетленет ӗнчӗленнӗ Ӗнешке!

---

* Ӗ с е л е — вӗтеле, хулӑпа çап.

# Ихĕлти Илле

*Тăрăхлав*



Иллене ие иленнĕ имĕш. Имшерленчĕ Илле, илемсĕрленчĕ, ирĕн-каçăн иклетет! Иртен-çӳрен ирçе-тутар ирсĕрленчĕ-ши? Илли иленчĕкчĕ-çке-ха, иртĕнчĕкчĕ. Иртĕхмессерен ишмеллеччĕ иккен ихĕлтине, иçмасса. Инкек-синкек инçетре-им?

Илпике инке илĕм-тилĕм им-çам ирĕлтерчĕ, икерчĕлĕх иçĕм ислентерчĕ. Ирĕлчĕкĕпе илес-милес имлерĕ-юмларĕ Илпике инке Иллене. Ирĕксĕрлерĕ, илĕрткелесе илчĕ. (Илĕртме ириссăр илĕртеймĕн-ха Иллене!) Иртенпех иккĕшĕ им-сим имĕрчĕç.

Ирĕлчĕкĕ иксĕлмест-ха Иллен, иçĕмлĕ икерчи иксĕлнĕçем иксĕлет. Илет, илет иçĕмлĕ икерче Илле, икĕ-виçĕ ирисне именмесĕрех илет — иклетнине иленччен ирттермеллех-çке-ха! Иçĕм ипĕ иккĕлентермест Иллене. Иленччен инçе-мĕн-ха...

Ирĕкленчĕ Илле, илĕхрĕ, илемленчĕ — иклетмест. Илле ихĕлтетни инçетренех илтĕнет. Ихĕлти! Ихĕртĕрин, ирĕхтĕрин. Иклетиччен иртĕхме интереслĕрех-тĕр Иллене. Ихĕрни иплĕ-сиплĕрех-тĕр...



# Йăпар, Йытă, Йĕпвăрри

*Пулмасла халап*

Йăмралăхра йывăç-курăк йăвă-йăвă. Йăмрисерен йĕкеллĕ. Йĕри-тавра йытпыршисем. Йăс-йăс-йăс! йăслать йĕпхӳ. Йăмралăхпа Йăпар, Йытă, Йĕпвăрри* йăлăмалла йăпăртаттараççĕ. Йĕпвăррийĕ йăптăхланнă Йăпарĕпе Йыттине йĕвенленĕ, йĕкĕлтешсе йĕлпĕрет. Йĕксĕк-тĕк йĕксĕк! Йăхях! Йăпарпа Йытта йывăр-çке йĕнерпе, йĕвенпе: йĕлме йĕлтĕрпе йĕкĕр йĕр йĕрлесе йăпанасси-им?

Йăрăланса йăлăхаççĕ — йăраланаççĕ, йăраланса йăмăлаççĕ — йăрăланаççĕ Йăпарпа Йытă. Йăлт йĕрĕнтерет: йĕпи-сапи, Йĕпвăррин йăрăм-ярăм йĕтĕн йĕмĕ, йӳле йĕленĕ...** Йĕркесĕрлĕх! Йӳшкĕнсех йĕпен-ха! Йӳтенĕ-им Йĕпвăрри, йӳтĕмсĕрмĕнсĕр йĕвенлерĕ. Йӳрĕкки йăвашланĕ.

Йăнăшрĕ-çке Йытă, йăнăшрĕ! Йăваланмаллаччĕха йĕпе-сапара йăвинче йăваланчăк Йăванла. Йăкĕ*** йыхăрчĕ-ши? Йăпарĕ, Йăпарĕ... Йĕвенлеттерекеннисен йăхĕнчен-им?

Йĕпвăррийĕ, йĕп йăкăртнăскер, — йĕплĕ-и, йĕпсĕр-и — йĕплешет!

---

* Й ĕ п в ă р р и — стрекоза.

** Й ĕ л е н — тумтир.

*** Йăк — инкек.

«Йӳтетмелле Йӗпвӑррине! Йӗрсе йӑлӑхтармалла!» — йышӑнчӗҫ Йӑпарпа Йытӑ.

Йытӑ — йӳтетмӗш, Йӑпарӗ — йӗре. Йӑх-йӑх йӑхӑлтатаҫҫӗ, йӑслаҫҫӗ, йынӑшаҫҫӗ, йӑскӑнланаҫҫӗ, йӑряпӑш йытпуллилле йӑмпӑлккаланаҫҫӗ. Йӗлӗпех* йӗреҫҫӗ. Йӑпӑртлӑха йӑвашланса йӑпӑлтатаҫҫӗ — йӑпӑр-япӑр йӗлмевӗсленеҫҫӗ**. Йӗкӗреш йӗлмевӗссем Йӗпвӑррине йӑтӑрласа йӑтаҫҫӗ — йывӑр! Йӗпвӑрри йӑшӑлтататайинччӗ... Йӑкӑртнӑ йӗппи йӑш! йӗплерӗ йӗлмевӗссене. Йӗлмевӗссем йӗтӗрпе йӗтӗрленӗн йӑванчӑҫ. Йӗпвӑрри йӑлӑмалла йӑпшӑнчӗ. Йӗтӗн йӗмӗ йӑрансӑр-мӗнсӗрех йӗтӗнленчӗ — йӗпе-ҫке-ха. Йӗтӗнӗ йӑрӑс, йӑпӑркалла*** йӑлтӑркка йышши, йӑлкӑшса йӑмӑхтарать, йӑмӑкӑм йӑпанмалӑх йӗкене йӑвалать...

---

* Й ӗ л ӗ — куҫҫуль.

** Й ӗ л м е в ӗ с — *(миф.)* чудовище.

*** Й ӑ п ӑ р к а — пурҫӑн.



# Куйкăрăш курма кайни

*Калав*

Куйкăрăш* курнине калакансем курмаллипех курнă-ши кĕмĕл кайăка? Кăвакарчăн курнă-ха, кăсăя, карăк, кайăк кăвакал, кăйкăр, кукăрсăмса, курак курнă — куйкăрăш курман.

Куйкăрăш курас килнипе касу кăлариччен, кӳршĕ-аршă куриччен кассипех каврăçлăха кайрăмăр. Кольăсен кĕсрине кӳлтĕмĕр, кӳме кăкартăмăр. Кутамккасемпе кушелсенче — камăн капăртма, кулач, кавăн кукăлĕ; камăн кĕлентĕр, кăлпасси; камăн какай, канфет, кĕленчепе кефир; камăн кĕсйинче кантăр — куйкăрăша кучченеç кирлĕ.

Каврăçлăхра кайăк-кĕшĕк — карти-картипе. Кăмпи — кусарпа касмалăхах.

Куккук куккуклатать, кӳлĕре кăвакалсем киленеççĕ, каврăçĕсем кашлаççĕ. Кашкăр-кашамансем кăна курăнмарĕç.

Кунĕпе каллĕ-маллĕ кумрăмăр Кольăсен кӳмипе. Катаран каç килет. Ку кайăка каçпа курайсан кăна.

Катăркаслăха кĕрсе кайрăмăр. Капан! Кăнтăрлачченех канлĕн кăна канатпăр капла. Кольăсен кĕсрине каврăçран кăкартăмăр, кӳпĕниччен кавлерĕмĕр.

---

* Куйкăрăш — телей кайăкĕ.

Кăра каç кĕçĕр. Кăрлачрилле кӳтсе кайрăмăр — катанпир кĕпе-йĕмпе кăна-иç. Курăкĕ кушăхнă, кăп-кăпăшка-ха... Капан кăмака-им? Кĕрĕкчĕ, кăçатăччĕ, калпакчĕ!

Кăткăсем кăтăклаççĕ, Коля камитсем каласа кăтартать — кулаймастăп. Карланкăна катрам капланчĕ. Куçа куççуль килчĕ. Киле каяс килет, кукамайпа кукаçине курас килнишĕн кулянатăп — каккуй куйкăрăш-ха кунта!..

Коля киленсех куккăшĕ килĕштерекен кулăшла калавсене кала-кала кăтартать. Кирилл кустăрмалла кусаланса кулать. Кула-кула кутăн-пуçăн кусрĕ-кусрĕ, кусрĕ-кусрĕ. Кирилл кăлтăрмач — кĕр-рĕс! кĕрĕслетрĕ. Кушака кулăш... Кармашать, кармашать Кирилл. Кĕпи-йĕмĕ куршанак кăна.

— Кирилл, качакасем килсе кăтăртаттарса каяççĕ! — кăлтăр-кăлтăр кулать Коля.

— Кашамансем кăшласа каймасан... — кăмăлсăррăн кăшкăрашать Кирилл.

Коля калавĕнчилле кашни каç капан кутне качака кĕтĕвĕ килет-тĕк? Кĕреçи-кĕреçипе кĕмĕл килсе купалĕç-им? Курăпăр-ха...

Кăра каç кĕçĕр...

Кольăсен кĕсри катăркаслăха кисрентерсе кĕçенчĕ, кукалерĕ — куйкăрăшĕ курăнасси килсессĕн курăнмĕ капла.

...Керменкке. Картлашкаллă крыльца кăларнă. Калăпăшĕпе капмарах, капăр. Калинкке кутĕнче карçинккасем, карта карлăкĕнчен кивĕ калушсемпе



катăк кăкшăмсем кăнтарнă, кантăра каштара — кĕвентепе кивнĕ кĕпе-йĕм... Кантăкран карчамас карчăк курăнса кайрĕ.

— Кĕххĕм-кĕххĕм! Кинеми, каçарăр-ха, купăс кирлĕччĕ, кивçенле... Куйкăрăш кайăка курассишĕн килтĕмĕр-ха. Купăс каласан кĕвĕпе киленме килмĕ-ши куйкăрăш?

Кĕтетпĕр-кĕтетпĕр — кăлăхах: курăнмасть карчăк. Ку кахал карчамас кăштăртатса килессе кĕте-кĕте... Кăнттамрах калаçрăмăр-шим? Кутемĕн кăмакаран кукăль кăларăн. Каялла каясшăнччĕ — кăрик! кăриклетрĕ: куйкăрăш! Калинкке-мĕн... Карчăк курăнса кайрĕ, кунталла курпунне кăларса килет. Калăм карчăкки-шим ку? Куç кĕски

Ч-40341



НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

кăтартать. Кам куç кĕскинчен кӳлепи кукăрăличчен куçлаять — куйкăрăша кураять... Каюра! Кăшкăрасшăнччĕ кăна — кĕр-рĕс! кĕрĕслетрĕм.

Курăннă кăна-мĕн ку калăм карчăккисем. Куçран-пуçран кăвар кăларса куçлăхсăр-мĕнсĕрех кустартăм килелле. Куйкăрăш курас килни какăра кайса кĕчĕ.

Кĕтĕм киле. Кĕтĕм кăна — курах кайрăм: кĕтесре — кайăк.

Курасах килсен, каçса кайса кĕтсен куйкăрăш килех килет-мĕн.

## Лайăх лаша

*Эскиз*



Лайăх лаша лӳппер-им? Лутрарах, лăпкă, лавĕ — лапка! Лесник лаши лавçине ларăва леçесшĕн. «Лотос» лагерьтен леререх — лаппипе люцерна. Люцерни лĕпĕшлĕ. Лачăртаттарса лӳчĕркес-им-ха Лантăшăн лĕпĕшлĕ люцернăна? Лаша лăп: лăпчăнчĕ.

Лавçи лăпкать:

— Лантăш, Лантăшăм...

Лешĕ лăпкăн лăсă лаплаттарать. Лаша-тăк лаша!



# Мерчен мăйракаллă Мулкач

*Мыскара*

Мăнаçлăччĕ Мулкач Мăнкунччен. Мăштăркка марччĕ, маттурччĕ — мĕнпур Мулкаччасси мухтанатчĕ.

Мăнкун. Мулкач минтер-тӳшекне майлаштаркаларĕ, мăйăхне майларĕ.

— Му-у-ук! — мĕкĕрчĕ мăнттай Маруçça.

— Мекеке-ек! — макăрчĕ мăшăр мăйракаллă Маçак.

Мекеклетмессерен-муклатмассерен Мулкачран мăшкăлаççĕ мăйракаллă Маруççапа Маçак. Мĕн мурĕшĕн мăтăклаççĕ?..

— Мăкла, мăкла, мăкла!

Мăклишĕнех мĕскĕн-шим Мулкач? Мăйрака мул муклашкиех мар-ха.

— Мемме, мемме, мемме, — меклетет Маçакĕ.

Мĕншĕн модăра-ши мăйрака? Мĕнле меслетпе мăйракаланмалла-ха? Мĕнле меню майлăрах-ши? Мăйракаланассишĕн мĕнле мелпе мăнăланмалла: мăкпа-и, мăянпа-и, мăйăрпа-и, Мăнкун маттипе-и? Муркавпах-и?

Мăнтарăн Мулкач мăнттай Маруççалла мĕкĕрмешкĕн, мăшăр мăйракаллă Маçакла мекеклетмеш-

кĕн мекеçленчĕ — меслечĕ майсăр-тăр: мĕкĕрей-мерĕ, мекеклетеймерĕ, макăраймарĕ.

Мăртлатрĕ Мулкач. Мĕкĕлтетрĕ мăраннăн малалла. «Маймăлсем»*, — мăкăртатрĕ мĕкĕлтетнĕ май.

Майсăр мехеллĕ Мăнкунра мăйракаланма! Мăкăль мăкăрăличчен муталансан мăкăльтен мăйрака майлашăнмĕ-и майĕпен?..

...Мăкăлĕ мăкăрăлчĕ-ха — Мулкачĕ мăлатукпа минретнĕн манăçрĕ, манăçрĕ... Мĕнех, мăкăлĕнчен майĕпен мăйраки мăкăрăлчĕ! Мăкла мар малашне Мулкач. Мăйраки мĕнешкел — мерченлĕ!

Мĕн-маччĕ мерчен минренĕ Мулкача? Мăйраки мĕншĕн?..



## Нăхтасăр нимĕр

*Калав*

Нăрăсем нăрăлтатаççĕ — нӳрĕке-тĕр. Наян Нестăр нăйăлтатни нӳрĕкех-ши? Никресленчĕ Наян. Нумай нушаланнă...

Нарăсранпах нишлĕленет, начарккаланать. Ниттясем нӳхреп никĕслеççĕ — Наянăн никĕт. Нухратсăр-иç. (Нухрачĕ нăхтасăр-çке.)

Нямуксем нимере нушаланаççĕ — Наян «начарланнăçем начарланать-мĕн». Намăс! Нухайккаччĕ.

---

* Маймăл — *(диал.)* упăте.

Нивушлĕ нĕркеçсем ниепле намăслантарайmaççĕ Наяна? Нимсĕрех никам намăслантараймĕччĕ. Нарастаран-им — неккес-çке Наян. Несĕлĕнче нихăшĕ нихçан наянланман.

— Нимерисем! Нимĕре! Нимĕре!

Нарспи-мĕн.

— Нимĕрӳ наркăмăшлă-и-ха?..

Наян нимĕршĕн. Нарăсранпа нишлĕскер — нă-ках: никĕс нăчăртатать. Нимĕрĕ нӳлеке — нехек-рен начлатрĕ, нимĕрĕпе — Наянĕ! Нăштик-нăш-тик нăшăклатать Наян... Нухрачĕ нăхтасăр-ха, нимĕрĕ? Нăхтасăрах-шим? Нимрен нимĕр нимĕ-реймĕн-мĕн. Намăс-çке Наяна, намăс!



## Пинеслу пехилĕ

*Калав*

Паян пичче пире Пинеслупа пал-лаштарчĕ. Пинеслу «Пуян патшалăхри пилĕк пат-тăрпа панулмиллĕ пике» пьесăра пурăнать.

Пушă пукан пулмарĕ пысăк пӳлĕмре: пурте пат-шапа пилĕк паттăра пăхма пуçтарăннă.

Пуçланчĕ премьера. Пирваях паттăрсен пу-ласлăхĕ пăшăрхантарчĕ пире. Пуш параппанла персонажсем пуçламăшĕнчех павра-павра пистер-чĕç...

Пинеслу — пукане пек пике. Пичĕ-куçĕ — пĕрлĕхен, пилĕкĕ Пăла пулли пек пиçĕ, пĕвĕсийĕ пăши пек, пуплевĕ пыл пек пылак. Пĕрре пăхса патвар пăхаттире пăхăнтарĕ, пăра пăслантарĕ. Пӳрнипе перĕнтĕр-ха — пир пурçăнланĕ. Пули-пулми пакăлтатмасть пуçватмăш пике, пурçукшăн пăшăрханмасть. Пӳлĕх панă пултарулăхĕ пур, пулассишĕн пилленĕ пĕлĕвĕ пур. Пăрчăкан, пĕт-пĕлтĕк путене! Пĕлĕт пики пулĕ Пинеслу, пирĕшти пуль! Пӳрнĕ-çке пире пирĕштипе паллашма!

Пĕрехмай пайта пайлакан, пĕр-пĕрне пăскăртакан путишле патшасем пуççапаççĕ пикене — пурпĕрех пархатарлă пулаймаççĕ. Пинеслу пилĕк паттăра пăтăрмахра пăрахмасть, пĕриншĕн пурнăç пăтти пĕçерме пуçлать — пăлатна пăхаттирпе пĕрлешет. Пуспа, пурлăх-тупрапа пуян-им пурнăçăмăр? Питĕ паха парне пулчĕ, паллах, пирĕншĕн Пинеслупа паллашни. Пытармастпăр, пĕчченлĕхрен пăрчĕ:

Перекетлĕ пĕр пĕрчĕрен — пĕр пучах,
Пĕр пучахран пин пĕрчĕ пулчĕ!
Пушă пулмĕ пӳлме пӳрчĕ...

Пиччемĕр, парăм пур пирĕн паянтан — пĕлетпĕр: пысăклансан Пинеслу пек пулмалла.



# Сухаллă савăнăç

*Калав*

Саккăрти самăркка Сашука сĕттурăх, салма, сухари сĕнеççĕ. «Саркайăкăм, савăклан-ха», — сăйлаççĕ савса. Сашукĕ сурать, сĕтел сармине сĕтĕрет — сĕтелĕ самантра сăйсăр-мĕнсĕр: савăт-сапи сылтăмра, сăмаварĕ сулахайра.

— «Сникерс» сутмаççĕ-и-мĕн? Сĕчĕ сахăрсăр! Салми сивĕннĕ! Сухариййĕ сарă — сенкеррине суйламаллаччĕ! Сеп-сенкеррине!

«Сникерсчен» сĕткен сĕнеççĕ.

— Сăмсана сусăрлатрăр! — сăтăрать Сашук сĕткен сирпĕннĕ «суранне».

Сатин саппунпа сăтăраççĕ. (Сăтăрмаççĕ-ха — сĕртĕнеççĕ.)

— Сăпкара сиктерĕр! — салтăнать самăркка.

Сехечĕпе сиктереççĕ сăпкара.

— Сахал! — сĕмсĕрленет Сашук. — Сăвăласа сиктерĕр!..

Сăлтавсăр-мĕнсĕр сентрепе сĕкĕшет сĕмсĕркке, сакка силлет, «сăртран» сикет, сехечĕ-сехечĕпе сăпсалла сĕрлет. Суккăрлатĕ-и-ха «сăннипе»? Сасси суя, сăмахĕ сăпайсăр...

Сехĕрлентерет-и сире саккăрти Самăркка? Сыхчă* сыхлатăрах! Саламатчĕ сисиччен.

---

* Сыхчă — *(чăв. миф.)* управçă.

Сасартăк сулхăнлатрĕ. Сас-хура сарăлчĕ: самаях сивĕтмелле-мĕн. Сакăрвунă «Сникерсне» сĕренренпе суйла-суйла сăвакан Сашук сунаслать. Сăмси «сухăрлă», сасси салху:

— Савăтри, сур сухалли, сĕтеклĕ-си? — сӳпĕлтетет селĕпскер.

Сӳпĕлтетет сана — сиплине сисет! Савăтри сухан-çке-ха — сухалланса сарăлнă, симĕс сăмсаланнă. Сухан сывлăхшăн сипетлĕ, сĕткенĕпе сунасран сиплеççĕ.

Сĕт суса сĕрчĕç, сухан сĕткенне сăрăхтарчĕç. Сăптăрать Сашук симĕс сĕвемсене, сĕткенне сыпкăм-сыпкăм сыпать. Сăн-пичĕ... савăнăçпа сапăрланать.

— Сухаллă савăнăçăмсем! — савса сăнать савăтри сухансене.

Сашук сып-сывă — сатур салтак!

Сĕмсĕрлĕхрен, сăнсăрлăхран, сăпайсăрлăхран сиплерĕ-шим сухан:

— Салам сире! Сывлăх сунатăп! Сывлăха сыхламалла, — спектакльтилле сăмахлать Сашук. Суфлĕрсăрах...

# Çумăртан çĕленĕ çулăклă çын

*Калав*



Çав çул, Çĕлен çулĕ çитеспе, Çĕнĕ çулчченех çумăр çурĕ, çиçĕм çиçрĕ. Çанталăк çатмари çăмарталла çăтăртататть.

Çулсем çăрăлчăк, çавра çил çавăрттарать. Çӳпçап çĕкленменни çеç. Çырмари çӳçелĕх, çыранри çĕмĕртлĕх, çăкалăх çап-çара — çĕнĕрен çулçă çурасла. Çуркуннехилле. Çапах çаралнă çерем çинче çитермере çӳрекен çук. Çемьесерен çынсем Çĕнĕ çула çывхартасшăн. Çуртсерен çӳхӳ, çӳрме, çаврака çăкăр, çăмарта, çĕрулми çимĕçĕ, çуйăнĕ, çырлимĕнĕ çителĕклех.

Çиччĕри Çемен çытар çинчен çуйкăннăн çĕкленчĕ. Çитет çывăрса. Çăвăнчĕ, çăпаласăрах çăмах çирĕ. Çупа çăкăр çырткаларĕ. Çăкăрĕ çунăкрах. Çуннă çăкăр çисен çулăмланатăн, çапăçмассерен çăмăллăн çĕнтерекенччĕ çапла Çемен. Çу çисен çамка çуталать-мĕн.

Çеменпе çич-сакăр çăтăлти çум çакки çутălла çаврăнса çитмелле çывăхри çаран çине çиçкĕнчĕç: çаран çинче çакнашкал çăрăлчăках-ши? Çĕнĕ çул çав çулăклă çынсăр çитеймĕ-çке!

Çĕнĕ çул-тăк Çĕнĕ çул! Çунашка çулĕ çук — çăмăл-им? Çутçанталăкĕ çăмăлттай-ши, çыннисем

çылăхлă-ши? Çитĕннисемшĕн çеç çухату çук-тăр, Çĕнĕ çулччен çумăр çуни, çăлтăр çунăнах, çитĕнў-шим çавсемшĕн? Çўлтисене çыру çырмалла, Çурçĕрпе çыхăнса çăхав çитермелле! Çĕршывĕпех çĕклемелле.

Çапах çĕр çăтăртаткалать-мĕн, çуркуннехи çи-пуçпа çавах çўçентерет, çил çан-çурăма çатăр сыртать.

Çак «çара çерçисем» çаран çине çитрĕç. Çаран çинче — çав çумăрах. Çĕнĕ çул сывхарни-мĕнĕ çук. Çулăклă çынсăр Çĕнĕ çул Çĕнĕ çул-и? Çурт çĕклесси çăмăлтарах-тăр? Çатракаран çыпăçтарас-им çулăклă çынна? Çăнăхран çăрас-и? Çĕтĕк-çурăкран çыхас-и — çĕтĕлесси çук. Çатракаран — çĕмĕрĕлчĕ, çĕтĕкрен — çуркаланчĕ, çăнăхран — çăкăрланасшăн...

— Çумăртан çĕлĕпĕр! — çиçрĕ Çемен. Çитмĕл çулхи çыннăн çўçĕ çўлелле çĕкленĕ!

Çуркаланнăскере çĕнĕрен çумăртан çĕлерĕç çапла «çĕвĕçсем»: çан-çурăмĕ — çумăртан, çил çунат çилхиллĕ çăра çўç-сухалĕ — çумăртан, çĕлĕк-алси — çумăртан, çи-пуçĕ — çумăртан, çăматти — çумăртан, çухи — çумăртан, çанни — çумăртан, çурăмĕ çине çакнă çĕклемĕ — çумăртан. Çилĕмпе çунат çыпăçтарчĕç — çумăртан. Çитменнине çăварĕ çумне çепĕç çемĕ çыпăçтарчĕç — çумăртанах. Çийĕнчен çурăм çинчи çатанĕпе çимĕçсем, çеçкесем, çуртасем, çĕленсем çакрĕç. Çĕлĕкĕ çинче — çырла çупкăмĕ. Çулăк çупăрлаттарасси çеç. Çатрака çĕклеттерчĕç — çулăках.



Çурçĕр çитеспе çеç, Çĕнĕ çул çăлтăрĕ çиссе çуталаспа, çанталăк çĕнелчĕ. Çумăр çумасть. Çил-тăман çĕкленчĕ — çăмхаланса çавăрттарать çеç.

Çавтăнса çитрĕç Çеменсемпе çитĕннисем çаран çине. Çумăртан çĕленĕ çулăклă çын çук. Çиленчĕшим? Çĕрте çулăкĕ çеç, çатраки. Çемми, çепĕçскер, çĕкленўллĕленнĕ, çил-тăманпа çураçнă. Çунатлăскер, çухалнă çын. Çунатсăр-тăк — çухалаймастчĕ çак çатăр çӳçентерекен çил-тăманра; çумăртан çĕленĕскер, çулăклă çыннах çавăнатчĕ!

— Çухалтăрин! Çитес Çĕнĕ çулччен çавăнса çитĕ-ха, — çатăлтатрĕ çамрăк-кĕрĕм.

Çемен çырлахрĕ.

# Тымарсăр Туйра

*Халап*



Туйрана* тымарĕ тарăхтармаллипех тарăхтарчĕ. Тымарĕнчен тахçанах таçта тарĕччĕ, тупата. Тупра-им тымар? Тымарсăррисем — тӳпере. Туйра тăпрапа тăванлашнă та тăрать, тăрать, тăрать... Тусĕ те — Тирек — тăратьха. Тăтăрин. Тиреке тымарĕ тивĕçтерет-тĕр.

Тăвăл тухса тăпăлтаринччĕ те Туйрана — тымарĕ тытать: типмен. Туртрĕ, туртрĕ тĕп-кăкне тилĕрнĕ Туйра, тăпаларĕ, темччен тăрмашрĕ, туртăнчĕ те — тăпăлса тухрĕ. Тинех! Тӳсеймерĕ, тарчĕ туххăмрах — тытаççĕ тейĕн. Талпăнчĕ таçталла, тӳпенелле туртăнчĕ, тĕлсĕррĕн тĕнче тавра талкăшрĕ.

Тымарĕнчен тарайнăшăн телейлĕ туять Туйра. Тулли тивлетлĕ. Тăрипе тан тăп-тăрă тӳпе тăррине тиве-тиве тĕлĕнчĕ Туйра — тамаша-тăк тамаша. Тĕлĕрмесĕрех тĕлĕк тĕлленет тейĕн: те тĕк Туйра, те — тарай тутăр, те... Тухатуллă-мĕн тӳпе туртăмĕ — тасатать.

Ту тăррисене тивсе тимĕрленчĕ Туйра, тинĕс тăварне тутанса теветкелленчĕ, тăвăл тулхăрăвĕнче тĕрĕсленсе тĕрекленчĕ...

---

* Туйра — çамрăк юман.

Темиçемĕш талăкран: те тăваттăмĕш, те тăххăрмĕшех — тăрук тăпах тăчĕ Туйра. Тĕрĕс-тĕкелехчĕ-çке, тем, тымарĕшĕн тунсăхларĕ-и? Тупсăмне тĕпчеймĕн — туйрĕ Туйра: такăнать. Тем тытамакĕ тытăнчăклатрĕ. Тĕпренчĕк тупса тутанасчĕ те, тăрантараканни тымарĕччĕ-çке! Тымарлăччĕ те — тутăччĕ те, тĕреклĕччĕ те. Тĕшĕрĕлесле тайкаланать Туйра, тураттисем типесшĕн.

Тринкки-тринкки Така тупăнчĕ тата таçтан. Тăрăхласшăн-и-ха Туйраран така? Тутине тăсса тăрать, тăранманскер. Тапăнчĕ-тĕк тапăнчĕ тăмалăх. Тӳрех турачĕсене туртса татрĕ, тунине те татăкласа татрĕ. Такама тарăхрĕ Туйра, тархасларĕ — тăрлавсăр Таки тав тума та тавçăраймарĕ, тĕпĕртеттерчĕ таçталла. Туйра тураттисенчен туя та тухмасть тинех — турпас. Тăпраччĕ, тăпраччĕ Туйрана! Тăмне те тиркемĕччĕ... Тен, тымарланайĕччĕ те-и? Тунката та тымарлă та. Туянĕччĕ тымарне — тинех тутăхман тенкĕпе те туянаймăн.

Тымарĕ татăлнисем тӳснине тымарĕпе татуллисем туяймĕç. Тĕрĕс турĕ Тирек тусĕ — тымарне татса тӳпенелле тармарĕ. Туйра типрĕ, типрĕ, тайкаланчĕ, тĕршĕнчĕ, тӳниччен татăклăн тупа турĕ: Туйра тăхăм-йăхĕнче текех тымарсăрланакансем тупăнмĕç...

Тымару татăлсан Турра тилмĕрни те тарам-мĕн.



## Усал

*Халап*

Улăпа Улпутран уйăраятăр-ши?

Улăппа Улпут — урам урлă. Улпучĕ услапскер. Урлăш-тăршшĕне уяймастăн. Улăпĕн утасĕ — утмăл утăмлăх, урхамахĕ — утмăл утаман утланмалăх. Утмăл ура улăмшăн, утмăл урапа утăшăн. Улăх-çаранĕн усси — утмăлтуратшăн, урхамахĕсен усси — утланакансемшĕн, урамĕсен усси — утаканчупаканшăн, утарĕсен усси — упа-утаманшăн.

Утмăл упа усрать Улăп. Утмăл упăте усрать. Уявсерен урамра упасемпе упăтесем умлăн-хыçлăн упаленеççĕ, ункăсемпе ухăнаççĕ, уртăшсенчен уртăнаççĕ, улаççĕ...

— Утмăл упа, утмăл упăте усăсăр усрать Улăп, — урăм-сурăм урмăшать усламçă Улпут. — Ухмахтăк ухмах.

Улмуççисем улмасăрлансан, уйсем ула-чăлаласан уйăпсем ушкăнĕпех уйăх уйне улăхрĕç-тĕр — уйăх уссăр урăхланмĕ. Уçлăхра уяртарах-шим?

Улпут уява уямасăр улма улăштарать, уланкă улăштарать, ука* улăштарать... Улталайсан улта-

* Ука — тесьма.

лать — усламсăр уйран уçламасть Улпут, унаç унамасть. Уксах утне улăштарасчĕ унăн Улăппа — улăштармасть. Упрать Улпут уксах утне. Уçăлтармасăр, уйрăм усрать. Улăппа улăштариччен урасăрлантăр.

Улăп унпа урпа улăштарĕччĕ, укçалла-мĕнле-и — упасемшĕн усăллă урпа — Улпут улăштармасть...

— Утравунта ухлĕм утти ухăнать, упасемшĕн усăллă утă... Утарна ухтарччăр упусем... Упăтўсем урăм-сурăм — ухватчĕ урисенчен!

Улăп урхамахне утланчĕ. Умĕнче Улайĕ уткалать-чупкалать. Укăлчаран улăхрĕç. Улăхра улах. Утсан-утсан улшăнчĕ ут: урать, утмасть. Унăн урхалăхĕнчен Усал уртăннă-мĕн! Урхамахĕ урлă-



пирлĕ уткалать, урмăшать. Унччен унăн урисем ушах урлă утăмлайнă!

— У-у-ух! Утăрья! Ух! — ухлатать Улăп.

Ухăлла ухлатать — усăсăр. Упалла улать — усăсăр. Усалпа усалланаймăн. Урăхла улталамалла:

— Усал, ула-чăпар урхамахăма уртарни усăсăрха. Улпутăн учĕ урăхла — унăнне уртарайăн-ши?

— Урăхла? — улшăнать Усал. — Урасăр-им?

— Уралли ураллах-ха — ултă ураллă. Учĕ утмăл утаман утланмалăх. Урисем укçа-тенкĕллĕ!

— Укçа-тенкĕллĕ? Уртараятăп. Уртараятăпах! Ултă ураллине-и, утмăл ултă ураллине уртаратăп!

Уртарайнă-и Усал Улпут утне, уртарайман-и — унтанпа укçа-тенкĕ усалланнă. Улталанасран упранасчĕ.



## Ӳнерçĕ Ӳхĕ

*Тĕрленчĕк*

Ӳхĕ — ӳнерçĕ. Ӳркенчĕкскер ӳплерех ӳкерчĕк ӳкересшĕн.

— Ӳсен-тăрансене ӳкерес-ши, ӳпре-пăвана-ши? Ӳпре-пăванĕ ӳстĕр-ха, ӳлĕм ӳкерĕп.

Ӳпĕнчĕ, ӳпĕнчĕ ӳсен-тăрансене ӳкерессишĕн — ӳкрĕ ӳппĕн-тĕппĕн — ӳпли ӳпленчĕ.

— Ӳ-ӳ-ӳ, — ӳпленчĕк ӳплинчен ӳлешет Ӳхĕ.

— Ӳхĕ, Ӳ-хĕ! — ӳсĕркелет Ӳпре. — Ӳкер-ӳкер, ӳркенетĕн-им? Ӳркенчĕк!

— Ӳркев-им-ха? Ӳкрĕм-ҫке, ӳпнех ӳкрĕм, — ӳпкелешет Ӳхĕ. — Ӳ-ӳ-ӳ, ӳпкене, ӳпкене-е-е!

— Ӳкин ӳк — ӳкер, — ӳкĕтлет ӳрĕк Ӳпре. — Ӳнерҫĕн ӳкермелле. Ӳлĕмхисемшĕн ӳкермелле!

— Ӳс-ха, ӳслĕклĕскер. Ӳссен ӳкерĕп. Ӳпленнĕ ӳплене ӳкерем-ха.

Ӳсмелле-тĕк ӳсмелле!

Ӳстерчĕ-ӳстерчĕ, ӳстерчĕ-ӳстерчĕ Ӳпре ӳт-пĕвне — ӳсе-ӳсе ӳхĕленчĕ. Ӳсĕреймест, ӳкĕтлеймест, ӳпкелеймест ӳхĕленнĕ Ӳпре.

— Ӳпре! Ӳпре! Ӳсрĕн-и-ха? Ӳкерĕп, — ӳхлетет ӳнерҫĕ.

Ӳсĕрмеҫҫĕ. Ӳкĕтлемеҫҫĕ. Ӳпкелемеҫҫĕ. Ӳхĕ ӳхĕрет-ха...

Ӳкĕнчĕ-тĕк ӳкĕнчĕ Ӳхĕ Ӳпрене ӳкерейменшĕн. Ӳрĕк-сӳрĕкленчĕ.

Ӳлĕм ӳкĕтлеттермĕччĕ ӳнерҫĕ ӳпресене, ӳпкелешӳсĕр ӳкерĕччĕ...



# Хура Хур

*Халап*

Хураҫкана хуҫи Хур хураллаттарнӑччӗ. Хураҫка хӑй хӗрлемес. Хурӗ хура. Хуришӗнех хурлаймӑн — хӳхӗмех-ха. Хӑйне хурӑм хӑй: хушӑран хӑравҫӑ, хушӑран хӑюллӑ... Хушшӑн-хушшӑн хӑямата хыпаланать, хутран-ситрен хурланчӑкскерех харсӑрланса хирӗҫет. Харампырланать-ха!

Хӑйӗн хырӑмӗшӗн хуҫан хуплӑвне хапсӑнма хатӗр Хура Хур: халсӑрлананҫиленет, хӑлӑхсӑрланать, хӗрхентерет, х-х-хлатать — хуҫтаратех хуплӑва, хыпкӑн. Хураҫкана хӗссе-пӗссе хӑналать, хыткукар. Хӗрхенни хӗрхӳ-ҫке!

Хуҫашӑн хальччен хӑнарилле хисепреччӗ Хураҫка. Хайхи-майхи Хура Хур Хураҫкана хытах хурлантариччен. Хуйхӑ-суйхӑ хӗвел-им: хӗртме хӗртет — хӗпӗртеттермест. Хӑр-харлӑхранах хӑрамӗччӗ Хураҫка, хӑть Хур хыттӑнах хӑтӑрса хӑвартӑр, хура хыпар-хӑнарпа хӑрттӑр, хӑть хӑва хуллипе хӑлаҫланса хӑмсартӑр — хӑнӑхнӑ хӗн-хура Хураҫка.

Хальхинче Хура Хур хурахланмаллипех хурахланчӗ: хӗсрӗ, хӗсрӗ Хураҫкана, хачӑлла хап-хап

хыпрӗ — хӑрах хӑлхине хыпрӗ хучӗ. Ха, хуйхӑ хутаҫҫи! Хураҫка хӑрӑлтатать — Хур хыҫҫӑн хӑрӑлтатать, Хураҫка хамлатать — Хур хирӗҫ Хураҫкалла хамлатать. Хур-тӑк хур, хӗртсурт хӑй хурлӑхӗшӗн хӑварнӑскер.

— Хӑвӑл хырӑм! Хӑрхӑм! — хӑртать хайхи. — «Хыпар» хаҫат харампыр Хураҫкасене хӗҫ-пӑшалпа хӑратма хушнӑччӗ-ха. Хӑрах хӑлхаллисем хисепсӗр. Хӳрӳне хатӗрлесе хур — хӗрхенмӗп: хачлаттарӑп!

Хӑмпӑ хурӑм — хырӑмламасскер, Хураҫка хухрӗ, хухрӗ — хурлӑхпах хытканланчӗ. Халь Хураҫка — хӑратмӑш: хӑрах хӑлхасӑр, хӑрӑк, хушкаланнӑ, хитремарланнӑ, хӑшхӑлти, хевтесӗр, хыҫкаланать — хӑрушӑ! Хурланнипе хӗвеланӑҫ хӗрелчӗ.



Хĕремесленнĕ хуçа хальхинче Хураçкана хӳтĕлерĕ: Хураçкана хураллама Хура хистесех хушрĕ.

Хураллакалать хай Хура Хур Хураçкана: хĕнхуртан, хăрушлăхран, хурахсенчен, хаяртан... Хураçкана «хуралланăçемĕн» хăвала-хăвала, хӳтерехӳтере халсăрлатмаллипех халсăрлатрĕ Хура Хур.

— Хăп-ха! — хӳтĕленесшĕн Хураçка.

— Харпăр хăйшĕн! Харпăр хăйшĕн! — хастарланать хăямат хăраххи.

Хăçанччен хăвалатчĕ-ши, хĕллечченех-ши?

Хӳптĕрлессишĕн хӳме хĕррине хăпарса хыçалти хапхана хупасшăнччĕ — хăйĕн хӳри хапха хăми хушшине хĕсĕнчĕ. Хирĕнчĕ-хирĕнчĕ, хăлаçланчĕ — хăтăлаймарĕ. Хускалаймасть хайхи-майхи.

— Хурах-х-х, хурах-х-х! — хăрăлтатать Хура Хур. — Хураçка, х-хурăнташăм, х-хăтарсамччĕ!

Хăшĕн хăшне хытăрах хĕрхенмелле-ши халь? Хăтарасшăнччĕ Хураçка Хура Хура — хапхи хăлăпсăр-мĕн. Хупă. Хирчĕ, хирчĕ — харам. Хисепĕ, хăявĕ* хире-хирĕç-шим?

Халь хыççăмах хушса хурам. Хуравлăр-ха: Хура Хурăн хӳри хапха хăми хушшине хĕсĕннĕшĕн хавасланмалла-ши? Хура Хур хăрăмпа хуралнă-ши, хаярлăхпа-ши, хушамачĕ Хура-ши? «Хура Хур» хайлав хапăлламалли халапах-и? «Хура Хур» хавассăр хайлав-и? Хавассăр хыпар-хăнар хыççăн хăпартлантараканни хӳреленекенччĕ.

---

* Хăяв — тавăру.

# Чĕрĕ чăрăш

*Юмах*



Чакакпа Чана чарăнайми чакăлтатаççĕ. Чараксăр чĕлхесем. Чĕмсĕркке Чăпар Чăх чĕнсе чăрмантармарĕ.

Чакак. Чухла, Чана, чашăк-тирĕк «ч»-па чылай-и?

Чана. Чылаях-тăр: чашăк, чĕрес, чӳлмек, чилек, чара...

Чакак. Чим-ха, чим! Чакакăн черет. Чукун.

Чана. Чаплашка.

Чакак. Чăм.

Чана. Черкке...

Чакак. Чă... че... чи...

Чакак чарăнчĕ. Чĕнеймест. Чееленсе чанкăлтататъ-ши:

— Чĕпĕтет, чĕпĕте-е-ет! Чĕ-пĕ-тет!

— Чăрăш чĕпĕтет-и? — чĕнмесĕр чăтаймасть Чăпар Чăх.

— Чăрăш чĕрĕ-им чĕпĕтме? Чĕпĕте-е-ет!

— Чарăн-ха! Чăн-чăн чунилли: «Чĕпĕтет, чĕпĕте-е-ет». Чĕпĕтмеллипе чĕпĕтет — чухах. Чуну чурăс, Чакак, — чăлах-чĕрĕленет Чана.

— Чаш-ш! чашлаттарăп чейпе!

— Чана чышкăпа чышкăлĕ!

— Чакак — чавсапа!

— Чана — чĕнпе!

— Чакак — чăпăрккапа!

— Чана — чукмарпа!

— Чакак — чулпа!

— Чана... Чана — чĕлĕпе! Чĕресĕр Чакакăн чатăрĕ — читлĕхре! Чим-ха, читлĕхӳн чертĕжне чернилпах чĕркелетĕп: чикмекĕ... чартакĕ... чусĕ... Чакакăн читлĕхĕ... Чаплăран чаплă читлĕх!

— Час чĕркелеттеретĕп читлĕх! Чернилупа чыхăнтаратăп, — чышать Чанана Чакак. — Читлĕх — чурасемшĕн. Чакак чаплă, чыс-хисеплĕ чăваш.

— Чăвашах-ши? — чĕптĕм чакмасть чăрсăр Чана. — Чăвашри чакаксем — чи-чи чиперрисем: чăмăш чĕппилле черчен, чарлан чĕппилле чечен, чĕкеç чĕппилле чĕвĕлти. Чухăнрах-ха, чĕмере. Чĕмпĕр чакакĕсем чинлă. Чăп-чăмăр. Чĕр чунсене чĕтреттересшĕн, чарусăрсем.

— Ча-ră-нăр! Чарăнатăр-и, чарăнмастăр-и? — чаркаланать Чăпар Чăх. — Чараксăр чĕлхе чамасăр...

— Читлĕх — чăтлăх-им-ха? — чиперленет Чакак. — Чуххăм чăкăлташатăн, Чанаçăм.

Чăпăрт! чуптурĕ Чакак Чанана.

— Чимĕр-ха! Чĕпĕ... чĕпĕ... чĕпĕ...

— Чана чĕтрет-çке! Чана, Чанаçăм, чирлемерĕнши?

— Чĕпĕ... чĕпĕ... чĕпĕ...

— Чиперехчĕ-çке. Чĕпписемшĕн-ши?

— Чĕпĕ... чĕпĕ... чĕпĕтет!



— Чӑрӑшах чӗпӗтет-ши?

— Чӗрӗ! Чӗрӗ чӑрӑш! Чышать, чӗрет, чӗрмелет чикӗсӗр!

— Чӗп-чӗрӗ-и?

— Чӗп-чӗрӗ, чӑнах. Чӑтлӑхалла чикеленчӗ...

— Чӗп-чӗрӗ чӑрӑшӑр — чӗрӗп-ҫке! — чӑтаймарӗ Чӑпар Чӑх.

Чухларӑр-и? Чӗрӗп чӗпӗтсе чӑркӑштарнӑ чараксӑр чӗлхеллӗ Чакакпа Чанана, чӗрӗп!

# Шăплăх

*Юмах*



Шурлăхкассинчи Шапа, Шуй*, Шăрчăк, Шăна — шутсăр шапăлккаскерсем. Шăрăх-и, шартлама-и — шуçăмпа шуçăмччен шапăлтатаççĕ. Шӳтлеççĕ, шахвăртаççĕ, шупашкарсене шĕкĕлчеççĕ Шурлăхкассинче. Шăматкунсерен шашкăлла шаплаттаркалаççĕ-ха, шахмат шутаркалаççĕ. Шăнтмассерен шанкă шаршанлаççĕ...

Шăши шутсăр шеллет шереметсене. Шăпăрланĕсене шел-çке! Шайĕ — шапăлтатса шуйханмалăх, шалăвĕ — шарккупа шӳрпелĕх.

Шăпăртланчĕ Шăши. Шухăшларĕ, шухăшларĕ... Шанчăк шыраса Шупашкаралла шăлтармалла-ши? Шухăшĕнче шап-шурă шалпар шăлаварпа Шăши, шăтăк-шăтăклă шурă шлепкепе, шакмаклă шупка шарфпа. Шутлăр-ха, шурлăх, шыв-шур шукăль Шăшишĕн-им? Шăвăнмаллах-шим шăршлă шăпăр шăтăкĕнчен?

Шупашкара шăвăнас шухăшне шарламарĕ Шăши. Шурлăхкассинчех «Шăплăх» шоу-концерт шаплаттарас — шайĕ Шупашкара шавлаттартăр, Швеци, Швейцари, Шотланди шайĕпе шайлаштăр!

---

* Шуй — улитка.

Шупашкар шăпчăкĕсемпе шăнкăрчĕсем шăп-шă-пăртин шăпланччăр! Шеп шухăш-иç. Шăтăклă шăрçасем Шурлăхкассинче шутрах-ха!

Шăматкун. Шăши, Шапа, Шуй, Шăрчăк, Шăна шап-шурă шалпар шăлаварпа, шăтăк-шăтăклă шурă шлепкепе, шакмаклă шупка шарфпа. Шерте Шăрчăкĕ шăхлич шăхăртать, Шăлйĕрен Шăна шăтăрмакпа шăтăртаттарать, Шуйханчăк Шуй шакăртмапа шакăртаттарать, Шатра Шапа шăнкăрав шăнкăртаттарать, Шухăшлавçă Шăши ши! ши! шăхăрать. Шăлтăр-шалтăр, шăтăрт-шатăрт, шăкăрт-шакăрт, шăнкăр-шанкăр, ши! — шăпăрт... Шалта шăнăçайми шăплăх...



# Ылхану

*Ытарлăх*



Ытларикун, ытлашши ывăннăран-ши, ытла ыйхăлаттарчĕ. Ырансенче Ырлăхкӳллинелле ыткăнас-и-ха?..

...Ывăткăçа ывăтрăм — ырашпăтри! Ырашпăтриййĕ ырханкка. Ывтăнмассерен ылтăн-кĕмĕл ывăтать. Ывăçласшăн — ывăçлаймастăп, ытамласшăн — ытамлаймастăп. Ыталарăм — ытараймастăпçке: ынатланать, ытарланать... Ывăтрăм ырçана. Ыткăнтăм ырçари ырашпăтриййĕпе Ыхраçырминелле.

Ытлаван ыткăнаттăм ырми-канми.

— Ырлăх-сывлăх ыхраçырмисене! Ырашпăтрине ырлăхпа ылмаштаратăн-и? — ыйтать ыйткалакан.

— Ытла! Ырашпăтриййĕм ытлă-çитлĕ ылтăн ывăтниех — ырлăх! — ырлатăп ырашпăтриййĕме.

— Ылханатăп!

— Ылхан. Ылтăнăма ырлăхпа ылмаштарма...

Ылханчĕ ыйткалакан. Ытахаль ылханчĕ: ывăлхĕрĕм ылтăнланчĕ!

Ытах ывăçăм ылтăнланнăран-ши, ытамăм ылтăнланнăран-ши? Ытараймасăр ыталарăм-çке-ха ывăл-хĕрĕме.

Ырă-çке. Ырлăх-пурлăхăм ылтăнран-ылтăн: Ылтăнпин ылмаллийĕ* — ылтăнран, ырçам — ылтăнран, ивăсăм — ылтăнран, ыхрам — ылтăнран, ырашăм — ылтăнран, ытларикунăм — ылтăнран... Ыйхăм ылтăнранах-тăк, ыранăм — ылтăнран!

Ытти-хытти ылтăнранни-мĕнĕ... ыратăвăм ылтăнран — ытларах ыраттарать, ы-ы-ы! Ыйткалакан ылханăвех-шим?

## Элексей эрлĕкĕ

*Эскиз*




Элексейсен экранĕ — элексĕ. Эрнипех эрлентерет**, эсремет. Эртелленсе элеклеççĕ экранрисем — эх-хе-хей...

Эксперимент-ши, эрнекунсерен эрчен-мерченпе эрешленнĕ «эрешменсем» эхлетеççĕ. Эккей, элесмелесленни эреветлĕ-шим? Эстради эстрадăлла-и? Этики, эстетики эсрелте, эфирта — эслепсĕрсен*** эшкерĕ эхĕлтетни.

Эсрелленет-им этем — элемĕ эсрелĕн. Эппин, этемлĕх элчелĕ экранра. Эмеллемеллех элес-мелес эшкере. Эптерле, эмелçĕ, этеме!

---

* Ылмалли — хĕрарăм капăрлăхĕ.

** Эрлентер — тарăхтар.

*** Эслепсĕр — çăткăн, ĕмĕтсĕр.



# Юрлакан юпах

*Юмах*

Юлташăм — юланутçă. Юпахĕ юрăхсăртарах — юставсăр, юлташăм — юрккăн.

— Юлашки юпах-им, юри юнтарать-тăк, юлаймастăн-им юлхавусăр?

— Юлаймастăп, — юптарать юлташ, — юлхавлантăрин. Юнтарĕ-юнтарĕ, юлашкинчен юравлăланĕ-ха юртти. Юрĕ, ют юпаха юратаймăпах.

Юмăç юмларĕ-ши — юрăхлăланчĕ юлташăн юпахĕ. Ютшăнмасть. Юмахлать! Юсăнсассăн юсанать, юлташшăн юншăхать, юрă юрлать! Юлташăм юрламасассăн — юрлаттарать:

Юхать юханшыв
Юрă юрласа,
Юхать юсанса,
Юппи — юлташа.

Юхать юханшыв
Юри юнтарса,
Юла юптарса,
Юхать юхăнса.

Юхать юханшыв
Юр юнтариччен,

Юка юхиччен,
Юплешке юппи
Ютта юличчен...

Юрккăнланчĕ юпах, юмартланчĕ: юпахĕ — юланутçилле, юланутçи — юпахĕлле...

## Яклашка

*Эскиз*



Яклашка ял-хулара ятне яманчĕ-ха. Ялан ялтăркка, ятуллă, яп-яка. Ялккасне ярапа янă, ярарисем явăнчăк, явлăкĕ япшака, ярăм-ярăм. Ярханах. Янаварĕсем япшар-мĕн, яваплă-мĕн, ятлаçмаççĕ-мĕн, ярăнчăкпа ярăнаççĕ-мĕн, ямăттишĕн-мĕн. Яклашка янаварĕсемшĕн ятарлă яшка янтăлать-мĕн, Яклашка явăçма ятлăсумлисемпе явăçать-мĕн — япăххисенчен-им? Ячĕ янăравлă-çке-ха: Як-лаш-ка!

## *Пĕчĕк тусăм!*

Килĕшрĕ-и сана «Сас палли çĕр-шывĕнче» кĕнеке? Хăвăн та сăвă-калав, юмах-халап хайлас кăмăл çуралмарĕ-и? Апла пулсан — хăюллăнах алла ручка тыт.

Аслă тусу пулнă май сана юлашкинчен калас сăмахăм пур манăн. Тĕнчере çичĕ тĕслĕ асамат кĕперĕ — ун ĕлккен тĕсĕсене суйла-суйла çĕр-пин тĕрĕ тĕрлекен ĕçчен халăх ачисем эпир!

Тĕнчере çичĕ тĕлĕнтермĕш нота — вĕсен çура-çулăхĕнчен çĕр-пин юрă кĕвĕлесе юрлакан пултаруллă халăх ачисем эпир!

Чăваш чĕлхинче вăтăр çичĕ сас палли — сасă çумне сасă, сыпăк çумне сыпăк хушса пин-пин сăмах ăсталакан ăслă халăх ачисем эпир!

Черет сан патна çитрĕ, тусăм: тĕрле, юрла, çыр. Ăруран ăрăва, ламран лама юнпа куçса пыракан пултарулăх пайăркине сӳнтерме ирĕк çук санăн: пирĕнччен пурăннисем мĕн калĕç, пирĕн хыççăн килекенсем мĕн тейĕç? Юратса ĕçле, пурнăç илемĕпе савăн.

Ăнăçу сана, шанчăклă тусăм.

*МАРИНА аппу*

# Тупмалли


*Çамрăк тусăм!* . . . . . . . . . . . . . . 3
Авăтайман Автан. *Тĕрленчĕк.* . . . . . . . . 5
Ăманпа Ăтăр ăмăртни. *Шăхвăрту.* . . . . . 6
Вăрă. *Калав.* . . . . . . . . . . . . . . 8
Евĕрлевçĕ. *Эскиз.* . . . . . . . . . . . . 10
Ёнчĕленнĕ Ёнешке. *Халап.* . . . . . . . . . 11
Ихĕлти Илле. *Тăрăхлав.* . . . . . . . . . 12
Йăпар, Йытă, Йĕпвăрри. *Пулмасла халап.* . 13
Куйкăрăш курма кайни. *Калав.* . . . . . . 15
Лайăх лаша. *Эскиз.* . . . . . . . . . . . 18
Мерчен мăйракаллă Мулкач. *Мыскара.* . . . 19
Нăхтасăр нимĕр. *Калав.* . . . . . . . . . 20
Пинеслу пехилĕ. *Калав.* . . . . . . . . . 21
Сухаллă савăнăç. *Калав.* . . . . . . . . . 23
Çумăртан çĕленĕ çулăклă çын. *Калав.* . . . 25
Тымарсăр Туйра. *Халап.* . . . . . . . . . 28
Усал. *Халап.* . . . . . . . . . . . . . . 30
Ӳнерçĕ Ӳхĕ. *Тĕрленчĕк.* . . . . . . . . . 32
Хура Хур. *Халап* . . . . . . . . . . . . . 34
Чĕрĕ чăрăш. *Юмах.* . . . . . . . . . . . 37
Шăплăх. *Юмах* . . . . . . . . . . . . . . 40
Ылхану. *Ытарлăх.* . . . . . . . . . . . . 42
Элексçей эрлĕкĕ. *Эскиз.* . . . . . . . . . 43
Юрлакан юпах. *Юмах.* . . . . . . . . . . . 44
Яклашка. *Эскиз.* . . . . . . . . . . . . . 45
*Пĕчĕк тусăм!* . . . . . . . . . . . . . . 46

Литературно-художественное издание

*Для детей младшего школьного возраста*

**Марина Федоровна Карягина**

**Сас палли çĕршывĕнче**

**В стране букв**

**Рассказы, сказки, эскизы**

*На чувашском языке*

Художник *Т.И. Немцева*
Редактор *О.Л. Васильева*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректор *Н.В. Вечеркина*
Компьютерная верстка *Е.Л. Карпеевой*

Общероссийский классификатор продукции
ОК 005-93—95 3003. Изд. лиц. №06317 от 26.11.01.
Подписано к печати 16.05.06.
Формат 70x90 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура
Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 3,51.
Учетно-изд. л. 1,72. Тираж 2000 экз.
Заказ № К-6225. Изд. №18.

ГУП «Чувашское книжное издательство»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

25 30

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ